**Адрес:**
**Чувашская республика**
**Моргаушский район**
**д. Москакасы**
**ул. Московская, 54 а**

**Телефон**
**(8 83541) 66-3-39**

**E-mail:**
**bibmosk@yandex.ru**

Москакасси ял библиотеки –
Чăваш Республикинчи Муракаш районĕн
«Централизациленĕ библиотека системи»
муниципаллă бюджет культура учрежденийĕн филиалĕ



# *Тĕрлĕ енлĕ Андрей Петтоки*

Москакасси,
2018

ББК К83.3(2Рос=Чув)
Т 35

Редакционный совет : А. А. Боярина
И. В. Иванова
И.В. Николаева

Тĕрлĕ енлĕ Андрей Петтоки : информаци брошюри / Москакасси ял библиотеки – Чăваш Республикинчи Муракаш районĕн «Централизациленĕ библиотека системи» муниципаллă бюджет культура учрежденийĕ филиалĕ; сост.: Л.В. Ванюшкина. - Москакасси, 2018. - 12 с.

Москакасси ял библиотеки –
Чăваш Республикинчи Муракаш районĕн
«Централизациленĕ библиотека системи»
муниципаллă бюджет культура учрежденийĕн филиалĕ

**Сумина, Кристина**. Андрей Трофимович Петокки (Петухов) [Текст] : [Андрей Петокки çуралнă кунне Муркаш районĕнчи Ахмане ялĕнчи палăк умĕнче поэта чыслани] / Кристина Сумина // Çĕнтерӳ ялавĕ. - 2009. - 14 октябрь (№ 82). - С. 2. - (Ентешĕмĕре асăнса).

**Теветкел, Н.** Çухалман ăсталăх / Н. Теветкел // Ялав. – 2005. – № 7-8. – С. 155-156.

**Тукташ, И.** «Поезд кайрĕ васкаса...» : [Андрей Петтокие асăнса çырнă сăвă] / И. Тукташ // Хыпар. – 2010. – 8 ака (№ 70). – С. 1.

**Туктина, Л.** «Вилемĕпе эс вилĕме çĕнтертĕн...» / Л. Туктина // Хыпар. – 2005. – 14 юпа.

**Туктина, Л.** Чĕррисенчен те эсе чĕрĕрех / Л. Туктина // Çĕнтерӳ ялавĕ. – 2005. – 15 окт.

**Шадриков, А**. Халăх асĕнче / А. Шадриков // Коммунизм ялавĕ. – 1990. – 8 авг.

Ялкир, П. Юлашки юн тумламĕччен сыхланă çĕршыва / П. Ялкир // Тантăш.– 1995.– 10 чӳк (№ 46).– С. 3.

* * *

**Антонова, Г.** Поэт с войны не вернулся / Г. Антонова // Совет. Чувашия. – 2005. – 19 окт.

**Афанасьев, П.** Петтоки (Петухов) Андрей Трофимович // Афанасьев, П. Писатели Чувашии / П. Афанасьев. – Чебксары, 2006. – С. 323-325.

**Зайцева, Е.** Не вернулся с фронта поэт / Е. Зайцева // Совет. Чувашия. – 2010. – 18 июня. – С. 7. Петтоки (Петухов) Андрей Трофимович (1905-1942) // В трагические годы : репрессированные чувашские писатели, журналисты и ученые = Синкерлĕ çулсенче : репрессие лекнĕ чăваш писателĕсем, журналисчĕсем тата ăсчахĕсем. – Чебоксары, 2013. – С. 207-210.

**Петухов (Петтоки)** Андрей Трофимович // Моргаушский район : краткая энцикл. – Чебоксары, 2002. – С. 110.

**Питернова, В.** Первый переводчик «Нарспи» / В. Питернова // Республика. – 2000. – 24 нояб. (№ 49). – С. 5.

**Прокопьев, В**. «Мы пройдем вселенской новью...» / В. Прокопьев // Чăваш ен. – 1993. – 12-19 июня (№ 24). – С. 12.

**Федоров, Г. И.** Петтоки (Петухов) Андрей Трофимович / Г. И. Федоров // Чувашская энциклопедия. – Чебоксары, 2009. – Т. 3 : М-Се. – С. 420.

**Ялгир, П.** Петтоки (Петухов) Андрей Трофимович // Ялгир, П. Литературный мир Чувашии / П. Ялгир. – Чебоксары, 2005. – С. 85-86.

## Библиографи:

**Абрамов, В.** Таврăннă сумлă ят / В. Абрамов // Хыпар. – 2006. – 12 ака. – (Литературăпа ӳнер кăларăмĕ).

**Агаков, Л**. Асран кайми тусăм / Л. Агаков // Ялав. – 1975. – № 10. – С. 26–27.

**Андрей Петтоки:** поэт кун-çулĕпе пултарулăхне çĕнĕлле ăнланни / [пухса хатĕрл., статьяпа ăнлантарусене çыраканĕ, кăтартмăшсене хатĕрл. Г. А. Дегтярев]. – Шупашкар : ЧГИГН, 2005. – 242 с.

**Алексеев, О**. Суралнаранпа 100 сул ситнине тивесле шайра уявласче / О.Алексеев // Хыпар. – 1995. – 20 ута.

**Арланова, Е.** Юлашки юн тумламĕ / Е. Арланова // Чăваш хĕрарăмĕ. – 2005. – 22-28 юпа (№ 42). – С. 10.

Артемьева, Е. Сăвăç кун-çулĕ / Е. Артемьева // Тантăш. – 2010. – 24 çĕртме (№ 25-26). – С. 8.

**Дегтеров, Г**. “Нарспин” пĕрремĕш куçаруçи / Г. Дегтеров // Коммунизм ялавĕ. – 1990. – 11 дек.

**Дегтярев, Г.** Поэт вăрçăран таврăнман... / Г. Дегтярев // Хыпар. – 2005. – 31 çу.

**Дегтярев, Г**. Тĕрлĕ енлĕ Андрей Петтоки / Г. Дегтярев // Хыпар. – 2005. – 22 авăн.

**Иванова, Е. Ю.** Андрей Петтоки пултарулăхĕнчи традиципе çĕнĕлĕх / Е. Ю. Иванова // Сборник научных трудов молодых ученых и специалистов. – 2003. – С. 52-58.

**Мамуткина, И.** Кашни йĕрки – ахах пĕрчи... / И. Мамуткина // Тантăш. – 2010. – 24 çĕртме (№ 25-26). – С. 8.

**Павлов, Н**. Поэт кун–сулĕ / Н. Павлов // Петтоки, Ф. Сăвăсемпе поэмăсем. – Шупашкар, 1964. – С. 3–5.

**Питернова, В**. А. Т. Петтоки / В. Питернова // Ялав. – 1995. – № 10. – С. 101–102.

**Плечов, Г.** Андрей Петтоки çинчен / Г. Плечов // Тăван Атăл. – 2005. – № 11. – С. 66-67.

**Прокопьев, В**. Çапăçăва çĕнтерессе шанса кĕретпĕр / В. Прокопьев // Тăван Атăл. – 1990. – № 11. – С. 70–72.

**Смирнова, Н.** Андрей Петтоки архивĕ – Шупашкарта / Н. Смирнова // Хыпар. – 2010. – 24 çĕртме. – С. 3.

**Станьял, В. П.** Андрей Петтоки сăвăç: пурнăçĕпе пултарулăхĕн тĕрленчĕкĕ / В. П. Станьял. – Шупашкар : Çĕнĕ вăхăт, 2005. – 36 с.

**Станьял, В.** [Андрей Петтоки çинчен] / В. Станьял // Ялав. – 1999. – № 2. – С. 37.

**Степанов, Г.** Петтокие Самар та чыслать / Г. Степанов // Хыпар. – 2005. – 1 чӳк. – С. 1.



## Пурнăç çаврăмĕсем

Андрей Петтокки Муркаш районĕнчи Ахмане ялĕнче 1905 çулхи юпа уйăхĕн 7-мĕшĕнче çуралнă. Ачаллах ашшĕсĕр тăрса юлнă.1913 çулта ялти чиркӳпе прихут шкулĕнче вĕренме пуçланă. 1917 çулта шкултан вĕренсе тухать. Ялта хресчен ĕçĕпе пурăнать. 1920 çулта Каршлăхри 2-мĕш класлă шкулта вĕренме пуçлать.Мăн Сĕнтĕрте вулавăша çӳренĕ. Унта никамран малтан комсомол ячейкине йĕркеленĕ те хăех ертсе пыма пуçланă.

1922 çулта,выçлăх вăхăтĕнче, ăна Хусана парти шкулне вĕренме янă. Кунта вăл икĕ çул вĕреннĕ,татах икĕ çул Тутарстанри Чистай уесĕнчи комсомол комитечĕн секретарĕ пулса ĕçленĕ, хăй вара Йĕкĕр вулăсĕнчи организацие ертсе пынă.

Сăвăсем çырма Андрей Петтоки шкулта вĕреннĕ чухне пуçланă. Тăван ялта та, Каршлăхпа Мăн Сĕнтĕрте те вăл ачасем кăларакан журналсене хутшăннă. Хусанта вĕренсе ĕçленĕ вăхăтра та илемлĕ литература ĕçне пăрахман. Литература историне Андрей Трофимович Петухов «Петтоки» хушаматпа кĕрсе юлнă. Ăна 1923 çулта Хусанта вĕреннĕ чухне тупнă. Малтанхи пайĕ – хăйĕн, иккĕмĕш пайĕ – çармăссен паллă çыравçин Александр Токаревăн (1907 – 1970). Малтанласа иккĕшĕ, хăйсен нихçан арканми туслăхне палăртса, пĕр пекех алă пуснă. Вĕсем иккĕшĕ пĕр псевдонимпа очерксемпе фельетонсем пичетлеме тытăннă.

1926 çулта Андрей Трофимович Чăваш Республикине таврăнать, парти ретне кĕрет. Каллех комсомол ĕçĕпе ĕçлеме тытăнать. 1927-1929 çулсенче Хĕрлĕ Çар ретĕнче тăрать. Вăл Петербургри чапа тухнă стрелковăй дивизире службăра тăрать, рота политрукĕ пулать. Армипе флотăн литература пĕрлешĕвĕн активлă членĕ пулнă.

1929 çулта Андрей Трофимович пĕтĕм вăйне колхоз чăмăртама парать. Мăн Сĕнтĕр тăрăхĕнче пуринчен малтан колхоз йĕркелет ( ăна «Ленинпуть» («Ленинçул») ят парать. Колхоз фермине йĕркелет, ăна та хăех ертсе пырать. Районта колхозсоюз тăвать. Ăна та хăй ертсе пырать.



1932 çулта А.Петтокки Шупашкара куçать. Унăн «Çирĕм иккĕ» поэми уйрăм кĕнекен пичетленсе тухать. Петтоки «Сунтал» журнал редакторĕ пулса тăрать. Ăна Чăваш писателĕсен союзне ертсе пыма суйлаççĕ, СССР писательсен союзĕн членне илеççĕ.

1936 çулта А.Петтоки Мускаври кинематографи институчĕн сценари уйрăмне вĕренме кĕрет .

Мускавра поэт К. Ивановăн «Нарспи» поэмине вырăсла куçарса хурать. Ку вăл-пысăк çитĕнӳ. «Нарспи» поэмăна Петтокирен малтан нимĕнле урăх чĕлхене те куçаракан пулман. Петтоки çак ĕçе никамран малтан хăй тĕллĕн тытăнса куçарнă.

Шупашкара таврăнсан наукăпа тĕпчев институчĕ çумĕнче библиотека заведующийĕнче ĕçлеме тытăнать. Ку вăхăтра Сталин репрессийĕ вăй илсех пырать. 1937 çулхи чӳк уйăхĕн 27-мĕшĕнче «Красная Чувашия» хаçатра «Сборник вражеских стихов» статья пичетлесе кăлараççĕ. Кунта В.Долгов А.Петтокин «Вунă çул»(1936) кĕнекине тиркесе тăкнă. Çапла Петтокине халăх тăшманĕ туса хураççĕ.




А.Петтоки Куйбышевра вицĕ çул краеведени музейĕнче социализм строительстви уйрăмĕнче наука сотрудникĕ пулса ĕçленĕ. Социализмла халăх хуçалăх çитĕнĕвĕсене активлăн пропогандăланă, хулари обществăллă политикăллă пурнăçпа таччăн çыхăннă. 1938 çулта кăна краеведени музейне вăтăр пилĕк пин çын кĕрсе курнă. Музей тĕрлĕ юбилейсен ячĕпе 10 выставка иртттернĕ. Куйбышеври писательсен пĕрлешĕвĕнче литература консультанчĕ пулса ĕçлет. Безымянка çывăхĕнчи дачăра пурăннă чухне 33 сăвăллă «Голубые дали» ярăм çырать.

1939 çулта Куйбышеври пединститутри истори факультетĕнче вĕренме пуçлать. Унта вĕренме кĕриччен хатĕрленӳ курсне çӳрет. Çакăнта паллашать те ĕнтĕ А.Петтоки хăйĕн пулас мăшăрĕпе ─ Галина Андреевнăпа.

Нимĕç фашисчĕсем Тăван çĕрĕмĕре сĕмсĕррĕн çĕмĕрсе кĕрсенех Андрей Трофимович политрук институтри юлашки икĕ экзамена пĕр кунтах тытать те вăрçа тухса каять. Кĕçĕн командирсене хатĕрлекен ултă уйăхлăх курсра вĕренет.





Галина Андреевна хăйĕн Людмила ятлă хĕрĕпе.



Андрей Петтоки кăнтăрта каннă чухне ( 1933 çул)



А.Петтоки и чувашские писатели.



*«Ялăм-йышăм!.. Килччĕ,илччĕ мана ытамна!..»*

**«Ленин çулĕ» пĕрлешӳллĕ хуçалăх ĕçченĕсем хăйсен председателĕпе — А. Петтокипе (иккĕмĕш ретре, сулахайран тăваттăмĕшĕ). 1930 ç. Утă уйăхĕн 13-мĕшĕ.**



**Чăваш çыравçисем Мускав хăнисемпе — Л. Леоновпа, Б. Ясенскипе тата А. Березинăпа пĕрле (Андрей Петтоки сулахайра ларать). 1935 ç. утă уйăхĕн 7-мĕшĕ.**







Лейтенант званине илсе фронта лекет. Взвод командирĕ пулать. Фронтран янă çырăвĕсем сăвăç чунне, ăсне, шухăш-кăмăлне ăнланма май параççĕ. Хăш-пĕр вырăнсене вуланă чухне чĕре пăчăртанса ыратать — мĕн тери пысăк ĕмĕтсем хараммăн татăлнă, мĕн чухлĕ паттăрлăх манăçа юлчĕ! çапăçăвкĕрес умĕн, ака уйăхĕн 17-мĕшĕнче, вăрманти йывăç тункати çине ларса çырнă çырăвĕ упранать

Юлашки çапăçăва кĕрес умĕн, ака уйăхĕн 17-мĕшĕнче, вăрманти йывăç тункати çине ларса çырнă çырăвĕ упранать. «Ку çырăва вăрманта, приказ кĕтнĕ вăхăтра çыратăп. Ман тавра—ман боецсем. Пурте вĕсем çирĕп кăмăллă, нихăшĕн сăнарĕнче те хăрани-туни палăрмасть. Паçăрах артиллери кононади пуçланчĕ—ку ĕнтĕ наступление кĕрес умĕнхи хатĕрленӳ пырать… Çапăçура темĕн те сиксе тухма пултарĕ, чĕрĕ юласса шанатăп. Пулма пултарĕ—вĕлерĕç те. Çапăçăва çакна ăнланса, тăшмана çапса аркатмаллине пĕлсе кĕретпĕр… Эпĕ киле таврăнатăпах!»

Андрей Трофимович Петтоки 1942 çулхи апрелĕн 18-мĕшĕнче хăйĕн взводне атакăна илсе кайнă чух паттăрсен вилĕмĕпе вилнĕ. Ăна Смоленск облаçĕнчи Селище ялĕ çывăхĕнче пытарнă. Çурхи ăшă кунсем çитсен унта саркайăксем юрлаççĕ, ешĕл çулçă çепĕççĕн пăшăлтатать. Вилтăприне шкул ачисем тирпейлесе тăраççĕ. Унта Чăваш Республикинчен те çамрăк йĕрлевçĕсем пĕрре кăна мар çитсе курчĕç.

Тăван ялĕнче, тăван кил умĕнче ăна асăнса лартнă палăк патĕнче йăмрасем хурланса лараççĕ. Петтокисен тĕп килĕ вырăнĕнче халĕ Пĕтр Васильевич Козлов кил-йышĕ пурăнать. Пĕтр Васильевич хисеплĕ çын, хăй картинче хитре вырăна ятарлăн уйăрса, вăл Андрей Петтоки кĕтесне уçнă,Виталий Павлович Васильев бригадирпа палăк лартнă.



## Литература ĕçĕ

Андрей Петтоки çырнисем нумай мар, сахал та мар. Хăй пуряннă чухне вăл «Çирĕм иккĕ» (1932), «Сăвăсемпе поэмăсем» (1936), 1937 çулта К.В.Ивановăн вырăсла куçарнă «Нарспине» Мускавра пысăк тиражпа (10 пин) кăларма пултарнă. 1964 çулта О.И.Оточинăпа М.И.Петрова пухнипе, Ю.И.Скворцов çыравçă тӳрлетнипе «Сăвăсемпе поэмăсем» кĕнеки тухнă. Унăн сăввисем тулли кĕвĕллĕ, сулмаклă та уçăмлă. Вăл вăхăтра вĕсем тата çĕнĕрех курăннă.

Вĕри чунлă Андрей Петтоки ял-хула тăрăх ывăнмасăр çӳренĕ. Вăхăт малта пыракансем пирки çырма ыйтнă. Петтоки çырнă. Калав та, тĕрленчĕк те хайланă. Тĕрленчĕкĕсен ячĕсемех тематикине уçса панă: «Чечекленет çĕнелнĕ ял» (1935), Алексей Моисеев: «Хĕрлĕ Сурăм» председателĕ (1935), «Халь вĕсем авăн çапаççĕ» (1934), «Культкомбайн акара» (1933), «Хĕвел ансан (1933)… Тĕрленчĕксенче - колхоз тунă вăхăт. Тăван тавра пирки çырнă «Ферма» очерк та питĕ паха произведени пулса тăнă.

Писательсен правленине ертсе пынă çыравçă литература ыйтăвĕсемпе те статьясем çырнă: «Илемлĕ литературăна масса хушшине сарас ĕçре прорыв!» (1931), «Историлле решени хыççăн» (1932), «Пятнадцать лет чувашскому гостеатру и чувашской драматургии»(1933), «Пултарулăх перестройкин Пленумĕ» (1933)…

А.Т. Петтоки пултарулахĕ нумай енлĕ. Вăл 1926 çулта Кĕркури Майоровăн сăввисене тишкерсе «Сунтал» журналта статья пичетленĕ. 1937 çулта Анри Барбюс пирки каласа панă. 1935 çулта çул тĕрленчĕкĕсен ярăмне пичетленĕ: «Бригада чувашских писателей в Казахстане» «В стране степей и снежных гор…»

А.Петтоки, кирек хăш çамрăк сăвăç пекех, малтанхи сăввисенче тăван кĕтесе, яла, çут çанталăка, улăх-çарана, тырпуллă уй-хире, шуçăмпа шăпчăка, юратăва хапăлланă. 1927-1930 çулсенче çырнă сăввисем: «Кĕмĕл тополь», «Юрă», «Уй-хир хĕрне», «Пит те лайăх-çке», «Хĕр патне», «Çичĕ çăлтăр» тата ыттисем чăваш лирикине кивелми пуянлатса тăраççĕ

Çирĕмри çутă кăмăл, яшлăхри чĕрĕ вăй тапса тăрать Каршлăх çулĕ çинче çырнă «Çурхи çил» сăвăра.

Çамрăк чухнех А.Т. Петтоки аслă А.С. Пушкин, М.Ю.Лермонтов, А.А.Блок, Генрих Гейне сăввисене куçарса аталаннă, Çеçпĕл сăввисене вуласа хăпартланнă. Вичкĕнĕн сиснĕ вăл çĕннине, хăйне пуянлатса çĕклентерекен вăйсене. Пултарулăхĕ çулсерен хăпарса та хăпарса пынă. Чăваш поэзийĕн паллă хайлавĕ—А.Т. Петтокин «Çирĕм иккĕ» поэми 1931 çулта «Трактор» альманахăн 1-мĕш кĕнекинче тухнă. 1932 çулта уйрăм кĕнекен тухнă. Хавхаланулла вăр-вар Петтокие паттăрлăх романтики илĕртсе тăнă. Çар ретĕнче пулни ăна «Çирĕм иккĕ» хавхине парнеленĕ. Поэма историйĕ хăй хĕсметре тăнă полк пурнăçĕпе çыхăннă. Ку поэмăра граждан вăрçин ятсăр паттăрĕсене мухтать, вĕсен вилĕм витĕр килнĕ вилĕмсĕрлĕхне чапа кăларать. Поэма Чăваш лиро-эпикинче «Арçури», «Нарспи», «Варуççи» поэмăсен ретĕнче тăрать. Вăл хăйĕн вирхĕнӳлĕхĕпе, унччен янăраман шухăш-туйăмĕпе паха. «Çирĕм иккĕ» поэмăпа А.Т. Петтоки чăваш лиро-эпикин аслă хапхине хăюллăн уçнă. Вăл чăваш поэзийĕн 20-мĕш çулсенчи çӳллĕ пусăмĕ,пахалăхĕ, çĕнĕлĕхĕ. Ун чухне хапăлласа йышăннă, халĕ те такăнмасăрах хавхаланса вулаççĕ.

